27-мĕш ӳул тухать. Унĕ 29 пус.

1945
ЯНВАРЬ
3
ЮНКУН
1(6752)

# ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТАШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧĔН ХАҪАЧĔ

## Совет Информаци Бюровĕнчен

### ДЕКАБРЬĔН 31-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Декабрĕн 31-мĕшĕнче пирĕн çарсем ЧЕХОСЛОВАКИРЕ, ЛУЧЕНЕЦ хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре тата кăнтăртарахра, БОЗИТА, КУРТАНИ, СУГА, ПИЛИШ, РОМГАНЬ ялĕсем туртса илнĕ, çавăн пекех тата ВЕНГРИРЕ, тăшмăнпа çапăçса, МИХАЛИ-ГЕРГЕ, КИШ-ГЕРГЕ, ПИЛИНЫ, ФЕЛФАЛУ, НОГРАД-ЛУДАНЬ, САКАЛ ялĕсене тата НОГРАД-ЛУДАНЬ, САКАЛ чугун çул станцийĕсене йышăннă. Çакăнпа пĕр вăхăтрах пирĕн çарсем ЧЕХОСЛОВАКИРЕ, ЛУЧЕНЕЦ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, ЧЕЛАРИ, ГЛАБОШОВЦЕ, ЗОМБОР, КЯРОВ, СКЛАБИНА, НОВАЯ ВСЬ, ОБЕЦКОВ, МАЛЫЙ КРТИШ, ЧЕБОВЦЕ ялĕсене тытса илнĕ. Çапла вара пирĕн çарсем ВЕНГРИ территорине ИПЕЛЬ вăрринчен пуçласа чикĕри ШАТОРАЛЬ-УЙХЕЛЬ хули таранах тăшмантан пĕтĕмпех тасагнă. Декабрĕн 30-мĕшĕнче пуле иртнĕ çапăçусен че пирĕн çарсем ку районра нимĕçсемпе венгерсен 540 салтакĕпе офицерне тытăкăна илнĕ.

БУДАПЕШТ районĕнче пирĕн çарсем тăшманăн çавăрса илнĕ группировкине пĕтерсе тăкассишĕн çапăçнă. БУДАПЕШТ хулин хĕвеланăç пайĕнче 300 квартал ытла йышăннă. Çакăнпа пĕрех пирĕн çарсем тăшманăн БУДАПЕШТ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехри сăртлă вăрманлă районра çавăрса илнĕ чăçĕсене пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă. ДЕМЕШ, ПИЛИШ-МОРОТ, БАШАХАРЦ ялĕсене йышăннă. Малтанлăха палăртнă тăрăх, тăшманăн БУДАПЕШТ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехри районра çавăрса илнĕ чăçсене пĕтерсе тăкассишĕн çапăçнă вăхăтра пирĕн çарсем нимĕçсемпе венгерсен 530 салтакĕпе офицерне тытăкăна илнĕ тата çакăн пек трофейсем тытса илнĕ: танксем — 42, хăй гĕлĕн çурекен тупăсем—36, тĕрлĕ калибрлă тупăсем—34, бронетранспортерсем—55, автомашинăсем — 782, тракторсемпе тягачсем — 18, çар пурлăхĕ тесе партăна прицепсем — 113, мотоциклсем — 68, паровозсем—14, чугун çул эшелонĕсем—5, понтонсем—21 тата тĕрлĕрен шутти çар пурлăхĕсем нумай тытса илнĕ.

Фронтăн шутти участокĕсенче палла ульшăнусемех пулман.

Декабрĕн 30-мĕшĕнче пирĕн çарсем нимĕçсен 44 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитлăй артиллери тăшманăн 21 самолетне персе ӳкернĕ.

### ЯНВАРĔН 1-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Январĕн 1-мĕшĕнче ЧЕХОСЛОВАКИРЕ пирĕн ЛУЧЕНЕЦ хули еннелле наступлени туса пыракан çарсем, тăшмапа çапăçса, ВЕЛИКИЕ ДРАВЦЕ, БОЛЬКОВЦЕ, ПИТРА, ГАЛША, ТРБЕЛОВЦЕ, МИКУШОВЦЕ (ЛУЧЕНЕЦ хулинчен 3 километр кăнтăртарахра), РАПОВЦЕ, ПАНИТСКЕ-ДРАВЦЕ, ТЭРИНЧ, БУШИНЦЕ, МАЛЫЕ ЗЛЕВЦЕ, МАЛЫЕ СТРАЦИНИ, ВЕЛИКИЕ СТРАЦИНИ, ПЛАХТИНЦ ялĕсене тата РАПОВЦ чугун çул станцине туртса илнĕ. Декабрĕн 31-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче районри пирĕн çарсем 515 нимĕç салтакĕпе офицерне тытăкăна илнĕ.

БУДАПЕШТ районĕнче пирĕн çарсем тăшманăн хулара çавăрса илнĕ группировкине пĕтерсе тăкассишĕн çапăçнă, 200 квартал ытла тата хулан хĕвелтухăç пайĕнчи РАКОШ чугун çул станцине туртса илнĕ.

Фронтăн шутти настокĕсенче палла ульшăнусемех пулман.

Декабрĕн 31-мĕшĕнче пирĕн çарсем нимĕçсен 43 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитлăй артиллери тăшманăн 4 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Чехословакире пирĕн çарсем тăшмапа çапăçса халăх пуянакан темиçе пункта тытса илнĕ. Пĕр енĕнчи чăçсем темиçе тĕлте Ипель шыв урлă каçса кайнă та Лученец хулинче виçĕ километрта пыраканМикушовце ялне туртса илнĕ. Кун каçиччен тăшманăн 400 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен 6 танкĕпе хăй тĕллĕн çурекен тупăсене персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Пĕр стрелковăй чăсри подразделенисем нимĕçсене вăйлă çирĕплетнĕ позицисенчен сирпĕтсе кăларнă, 2 тупă, 14 гранат, 7 миномет, 30 пин патрон, 35 пин граната тытса илнĕ. Тепĕр участокра пулмет расчечĕн командирĕ Ниякин, пулеметпа персе, тăшман ушкăнне çĕр çумне выртарнă. Петухов офицер ертсе пыракан батальон çĕрле гитлеровецсем çирĕпленса ларнă яла вăркăнса кĕрсе кайнă. Совет боецĕсем тăшман пехотине пĕр рота тăрăх вĕлерсе пĕтернĕ те ир енне çав яла нимĕç захватчикĕсенчен пĕтĕмĕшпех тасатса пĕтернĕ. Çапăçу пĕтнĕ хыççăн ялти халăх хӳтлăхсенчен тухнă та пирĕн боецсене савăнса йышăннă.

* * *

Будапешт районĕнче пирĕн çарсем тăшманăн çавăрса илнĕ группировкине пĕтерсе тăкассишĕн çапăçнă. Хулан хĕвелтухăç пайĕнче пирĕн подразделенисем штурмлакан пĕчĕк ушкăнсене пайланса çапăçаççĕ, нимĕçсене çуртсенчен сирпĕте-сирпĕте кăлараççĕ. Гитлеровецсем подвалсемпе чартаксенче çирĕпленсе ларнă та тупăсемпе, пăшалсемпе тата пулеметсемпе вăйлăн персе тăраççĕ. Совет боецĕсем тăшман тылне кере-кĕре каяççĕ те, çуртсене вăркăна-вăркăна кĕрсе, унти нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене пĕтере-пĕтере тăкаççĕ. Пĕр чăсри подразделенисем кун каçиччен хулан çичĕ квартале йышăннă, гитлеровецсене икĕ рота пĕтерсе тăкнă. Адавкин сержант командир пулса ертсе пыракан автоматчиксем вăйлă çирĕплетнĕ çурта кĕрсе кайнă та тăшман туппине пулеметне пĕтерсе тăкнă. Шмелев рядовой нимĕçсем пулеметпа персе тăрăкан çурт патне шуса çитнĕ. Çав çурта граната вăркăнтарса, Шмелев тăшманăн пулемот расчетне пĕтерсе тăкнă. Кун хыççăн ялюллă боец çав çурта кĕрсе кайнă. Иккĕмĕш хутра ăна виçĕ гитлеровец тапаннă. Шмелев юлташ ихĕ нимĕçне персе пĕрахнă, виççĕмĕшне хĕçпăшалĕ-ĕçлантарса тытăкăна илнĕ.

Будапешт хулин хĕвеланăç пайĕнче пирĕн çарсем тăшманăн тĕреклетнĕ пункчĕсене штурмланă. Кун каçиччен нимĕçсен 1.000 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă, тăшманăн 24 танкне тата 13 бронетранспортерне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. 429 нимĕç салтакĕпе офицерне тытăкăна илнĕ.

Çĕрле нимĕç самолечĕсем хăйсен Будапешт хулинче çавăрса илнĕ çарĕсене вăрçă хатĕрĕсем илсе пырса панă. Пирĕн зенитлăй артиллери нимĕçсен 2 транспорт самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Чехословакире Кошице хулинчен хĕвелтухăçнерехре нимĕç автоматчикĕсен роти. вăрманпа пырса пирĕн чăссем тăракан вырăна кĕрсе кайма хăтланнă. Боевой охранăвенире тăнă совет боецĕсем гитлеровецсене вăхăтра асăрханă та пăшалсемпе, пулеметсемпе пеме тытăннă. Часах çав нимĕçсене пирĕн артиллеристсемпе минометчиксем пеме тытăннă. Тăшман отрядне сапаласа янă. Пирĕн позицисем патне пыракан вырăнсенче 40 нимĕç вилли выртса юлнă.

Украинăри 1-мĕш фронтра пирĕн разведчиксем тăшман тăракан вырăна кĕрсе кайнă та нимĕç салтакĕсен ушкăнне пĕтерсе тăкнă. Совет Союзĕн Героĕ старшина Сохин пуç пулса ертсе пыракан снайперсем пĕр ӳлăх хушшинче 93 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Совет Союзĕн Виçĕ хут Героĕ Покрышкин авиачăсĕнче истребительсем çаплаçăк лайăх тăнă ултă кун хушшинче нимĕçсен 5 самолетне персе ӳкернĕ, 5 паровоз, çавăн пекех тата тăшманăн çар хатĕрĕсем турттарса пыракан темиçе автомашинине пĕтерсе тăкнă.

## Нимĕçсем Будапешт районĕнче совет парламентерĕсене провокацилле тата тискеррĕн вĕлерни

Украинăри 3-мĕшпе 2-мĕш фронтсем тăшманăн Будапешт таврашĕнчи группировкине хупăрласа илессинче 1944 çулхи декабрĕн 26-мĕшĕнче вĕçлесе çитерни çинчен пĕлтернĕччĕ. Декабрĕн 27-мĕшĕнче каçпала çав фронтсен çарĕсем хĕвелтухăçпе хĕвеланăç енчен Будапешт патнех çитнĕ те хула хĕррине çапăçма пуçланă.

Çав вăхăтрах пирĕн çарсем, наступлени туса пырса, Будапештран 60 километр таран хĕвеланăçнелле кайнă. Çапла вара, тăшмана хăйĕн хупăрласа илнĕ группировкине пулăшма пултарайми туса хунă.

Çапла вара, совет çарĕсем хупăрласа илнĕ пирки Будапештри нимĕç дивизийĕсем тата венгерсен хĕрлăшала ку таранччен пăрахман чăçĕсем пĕтсе ларасси умне тухса тăнă.

Украинăри 3-мĕш фронт çарĕсен командующийĕ Совет Союзĕн Маршалĕ Толбухин тата Украинăри 2-мĕш фронт çарĕсен командующийĕ Совет Союзĕн Маршалĕ Малиновский, вăрçă вăрçмалли пĕтĕм техники правилăсемпе йăласене асра тытса, 1944 çулхи декабрĕн 30-мĕшĕнче, Будапешт таврашĕнче хупăрласа илнĕ тăшман çарĕсен командованийĕ патне тата пĕтĕм офицерĕсем патне парламентерсем ярса, çапла ультиматум тăратнă:

«Будапешт районĕнче хупăрласа илнĕ нимĕçсемпе венгерсен çарĕсен командующине генерал господина, нимĕçсен 13 ТД, МД СС «фельдхернхалле», 271 ПД, 8-мĕш тата 22-мĕш КД дивизийĕсен тата штурмовой тупăсен 239-мĕш бригадин командирĕсене, генералĕсене тата офицерĕсене;

Венгерсен 1 МД, 10, 12, 20 ПД, 1-мĕш охранăй полкĕн, 3-мĕш полици полкĕн, запасри 206-мĕш полкĕн командирĕсене, генералсене тата офицерсене;

Нимĕçсемпе венгерсен Будапешт районĕнче хупăрласа илнĕ чăçĕсен командирĕсене пурне те.

Декабрĕн 25-мĕшĕнче Украинăри 3-мĕш фронт çарĕсем Дунай шывĕ хĕррине тухса тата Естергом хулине туртса илсе, çав районра Дунай шывĕн тепĕр енче çапăçакан Украинăри 2-мĕш фронт çарĕсемпе пĕрлешнĕ те нимĕçсемпе венгерсен Будапешт районĕнчи çарĕсене пĕтĕмпех хупăрласа илнĕ.

Çав вăхăтрах Хĕрлĕ Çар чăçĕсем, çĕмĕрсе тăкнă нимĕç çарĕсене аркатса пырса, Чехословакире ăнăçлă наступлени туса пыраççĕ. Вертэшхэдьшэг тăвĕсем урлă каçса кайса, вĕсем нимĕç çарĕсене пĕтĕм Венгрирен хăваласа калараç ĕçе вĕçлеççĕ.

Балтика тинĕсĕ таврашĕнче Шернер генерал ертсе пыракан нимĕç çарĕсен группировкине пĕтерсе тăкас ĕç вĕçленсе пырать.

Хĕвеланăçĕнче те гитлеровецсен çав тери сăйхăшнă наступленийĕ пăчланать, вăл вăрçă ĕçне нихăш енчен те улăштарма пултараймасть.

Сирĕн пата нистан та пулăшу çитме пултараймасть. Венгрире аркатса тăкнă нимĕç дивизийĕсен юлашкийĕсен тата халиччен хĕçпăшала пăрахайман Венгри чăçĕсен, Будапешт районĕнче Эсир ертсе пыраканскерсен, инеплe шанчăк та çук. Сирĕн каялла чакмалли çулăрсене пурне те тытнă. Çар хисепĕ енчен те, хĕçпăшал енчен те эпир сирĕнтен темиçе хут та вăйлăрах пулни паллах. Командующи пулса тăрса, Эсир тата хупăрласа илнĕ çарсен офицерĕсем пурте малашне пире хирĕç çапăçнинчен ним усси те çуккине пĕлсе тăратăр. Эсир хирĕç тăрса çапăçни Сирĕн сăра пĕтерсе тăкасси, мирлĕ халăха нумай вĕлересси тата Венгри столицине Будапешта ишĕлтересси патне кăна илсе пырать.

Ним ахальренех юн тăкас мар тесе, çавăн пекех тата Будапешт хулине, историллĕ пуянлăхсене, культурăпа искусство памятникĕсене упраса хăварас тесе тата халăха çăлса хăварас шутпа, çак условисем тăрăх парăнма хушатпăр:

1. Нимĕçсемпе венгерсен Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарĕсем, хупăрласа илнĕскерсем, Сирĕн штабăрсемпе пĕрлех, халех çапăçма пăрахаççĕ.

2. Пур сыннăрсене, хăçпăшала, çар хатĕрĕсене, транспорта тата пĕтĕм техникăна пĕр сехетлемесĕр пирĕн алла паратăр.

3. Çапăçма пăрахнă генералсене, офицерсене тата салтаксене пурнăç тата хăрушсăрлăх паратпăр. Нимĕçсене вăрçă хыççăн—Германие е хăйсем каяс тенĕ урăх сĕршыва кайма ирĕк паратпăр. Хĕрлĕ Çар аллине парăннă венгерсене, регистрацине допрос тунă хыççăн, яма пулатпăр.

4. Парăннă çар сыннисен çар формине, çар паллисене, орденĕсене, уйрăм харпăрлăхне тата хаклă йышши япалисене хăйсем çумĕнчех хăваратпăр. Аслă офицерсен аллинче тата хĕç тавраш не те хăваратпăр.

5. Аманнисемпе чирлисене пурне те медицина пулăшăвĕ паратпăр.

6. Парăннă генералсене, офицерсене, унтер-офицерсене тата салтаксене çийĕнчех тĕрлантарма тытăнатпăр.

Сирĕн ответа:

**Дунай шывĕн сылтăм енче** — 1944 çулхи декабрĕн 30-мĕшĕнче, Мускав вăхăчĕпе 12 сехетре кĕтетпĕр. Сирĕн представительсен шурă ялавлă автомобильпе Будăран Эрда каякан çулпа пымалла.

Сирĕн представительсене ятарласа уйăрнă вырăс офицерĕ Будăран кăнтăртарахра вырăссен малти позицийĕсен районĕнче декабрĕн 30-мĕшĕнче, Мускав вăхăчĕпе 12 сехетре кĕтсе илет.

Дунай шывĕн сулахай енче — декабрĕн 30-мĕшĕнче, Мускав вăхăчĕпе 12 сехетре кĕтетпĕр. Сирĕн представительсен шурă ялавлă автомобильпе, Будапештран Вечеша каякан çулпа пымалла.

Сирĕн представительсене ятарласа уйăрнă вырăс офицерĕ вырăс позицийĕсен районĕнче çав шоссе çинче декабрĕн 30-мĕшĕнче, Мускав вăхăчĕпе 12 сехетре кĕтсе илет.

Хĕçпăшала пăрахма хушнине Эсир йышăнмасан, Хĕрлĕ Çарпа Сывлăшçар флочĕ хупăрласа илнĕ Сирĕн çарсене пĕтерсе тăкма пуçласçĕ. Вĕсене пĕтерсе тăкнăшăн, Будапешта ишĕлтерĕнĕшĕн тата Будапешт халăхĕ пĕтнĕшĕн пĕтĕм ответа Сирĕн тытмалла пулать.

Украинăри 3-мĕш фронт командующийĕ
Совет Союзĕн Маршалĕ
ТОЛБУХИН.

Украинăри 2-мĕш фронт командующийĕ
Совет Союзĕн Маршалĕ
МАЛИНОВСКИЙ.

Ультиматум парса Совет командованийĕ усăсăр юн тăкас мар тесе, çавăн пекех Венгри столицине, унăн историллĕ пуянлăхĕсене, культурăпа искусство памятникĕсене упраса хăварас тесе шутланă.

28—29-мĕшĕсенче çĕрĕпех тата декабрĕн 29-мĕшĕнче ирхине Совет çарĕсен сасă сарăкан вăйлă станцийĕсем фронтăн малти линийĕнчен Будапешт патĕнче хупăрласа илнĕ çарсемпе вĕсен командованине Ультиматум пама совет парламентерĕсене ярасси çинчен, çавăн пекех тата парламентерсем хăш вăхăтра тата хăш çулпа пырасси çинчен пĕлтернĕ. Парламентерсем кайманлли участокра вара Хĕрлĕ Çар чăçĕсем пеме чарăннă.

Декабрĕн 29-мĕшĕнче, Мускав вăхăчĕпе 11 сехетре, Дунай шывĕн сулахай енчи участокран пысăк шурă ялавлă автомобильпе совет офицерĕ-парламентер тăшман тăракан вырăна кайнă.

Пирĕн парламентер Будапешт хумĕнчи Кишпештăм кăнтăр-хĕвелтухăç хĕррине, тăшманăн малти позицийĕсем патне çывхарсан, шурă ялав лайăх курăннă пулин те, нимĕçсем совет парламентерне пăшалсемпе, пулеметсемпе тата тупăсемпе вăйлăн перĕ те вĕлернĕ.

Çав вăхăтрах тепĕр совет офицерĕ-парламентер тăлмачпа пĕрле Дунай шывĕн сылтăм енчи участокран пысăк шурă ялавпа пырса Будаершт ятлă ялтан тăвата километр хĕвелтухăçнерехре фронт линийĕ урлă каçнă. Çавăнтан ăна нимĕç çарĕсен штабне илсе кайнă. Нимĕç командованийĕ ультиматума илмен тата калаçасшăн та пулман. Парламентер каялла тавраннă чухне нимĕçсем ăна хыçалтан пеме пуçланă та вĕлернĕ. Унпа пĕрле пулнă тăлмач писăртран çеç сывă юлнă.

Çакăн пек пулнă ĕнтĕ Будапешт районĕнче совет парламентерĕсене тискеррĕн юри вĕлерни.

Хальхи вăрçăсен историлĕ çавăн пек преступленисем курман. Авалтанпах парламентерсене никам та тĕкĕнмен. Вăл право йăлана кĕнĕ. Ана 1907 çулта Гаагăра «Çĕр çинчи çарсем çапăçассин законĕсемпе йăлисем» çинчен çырнă конвенцире те кăтартса панă. Гитлерла тискерсем хăйсем законсене пăхăнманнине тата тепĕр хут пĕтĕм тĕнчене кăтартса пачĕç. Германи алă пуснă договорсемпе конвенцисене вĕсем нимĕн вырăнне те хумаççĕ. СССР çине вăрă-хурăпла тапăннине вăрçă пуçласа, вĕсем вăрçа варварсемпе сыпăнсенсем пек туса пычĕç, вĕçлессине те вĕсем ăна ирĕр те хăравçă сывлăлерекенсем пек вĕлерĕççĕ. Совет парламентерĕсене тискеррĕн вĕлерсе, нимĕç командованийĕ—«пирĕн хыççăн кирек мĕн пултăр» тенĕ шухăшпа вăрçать. Нимĕçсем хăйсемпе пĕрле Будапештри миллионлă халăха та пĕтерсе хурасшăн. Мĕн вара нимĕçсемшĕн Венгри столици тата столицăри культурăллă халăл япаласем?

Ирĕр провокаци тунипе тата вăрă-хурахла вĕлернипе гитлеровецсем хăйсен ĕмĕрне тăсасшăн. Анчах та Совет командованийĕн ультиматумне йышăнмасăр тата парламентерсене вĕлерсе, фашистла тискерсем хăйсен пирĕсене нумайлăха упраса хăварас çук. Тем тĕрлĕ хирĕç тăрсан та, Хĕрлĕ Çар тăшмана аркатса тăкать.

Будапешт хулине аркатнăшăн, мирлĕ халăха вĕлернĕшĕн пĕтĕм ответа, паллах ĕнтĕ, çын вĕлерекенсемпе палачсен гитлерла ушкăнĕн тытмалла пулать.

СОВИНФОРМБЮРО.

### ÇУЛТАЛАКРА ИК-ВИÇЕ ХУТ ТЫРПУЛ ТУСА ИЛНИ

Туркменири хăшпĕр колхозсем кĕтал пĕр лаптăк çинчех ихĕ хут тырă туса илнĕ. Тахта районĕнчи «Ленинград» колхозра 30 гектар çĕр лаптăкĕ çинче тулă вырса илнĕ хыççăн джугара ятлă тырă акнă та кашни гектар пуçне 19 центнер вырса илнĕ.

Ташкент облаçĕнчи колхозсенче кĕрхи тулă пуçтарса кĕнĕ хыççăн çав вырăна рис, джугара, вир тата кунжут акнă. 7.000 гектар лаптăк çинче вара вăйлă тырпул туса илнĕ. (ТАСС).

### ÇЕНЕ МАГНИТОМЕТР

СССР-ти Наука академийĕн Уралти филиалĕн научнăй работникĕсем, Янус профессор ертсе пынипе, çĕнĕ магнитометр шухăшласа кăларнă. Çав прибор пулăшнипе, путнă карапсене хăвăрт тупма пулать, вырса кĕме йывăр вырăнсенче çĕр айĕнчи пуянлăха тĕпчесе пĕлме пулать. Ку таранччен аппаратсенчен çак прибор 15 хут слесмлĕрех. Прибор лайăх ĕçлет. (ТАСС).

## РСФСР шкулĕсенчи учительсене СССР орденĕсемпе медалĕсене парса наградăланă

Российăри Советлă Федерацийĕлле Социализмлă Республикăн шкулĕсенче вăсене вĕрентесе ӳстерео тĕлĕшпе ăнăçлăн тата вăя шеллемесĕр ĕçленĕшĕн, ССР Союзĕн Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх, РСФСР шкулĕсен учителĕсене орденсем тата медальсем парса наградăланă.

Аяларахра Чăваш республикинчи наградăланă учительсен хушамачĕсене çав Указран илсе пичетлетпĕр.

Республикăри шкулсенчи çак учительсене наградăланă:

### ЛЕНИН ОРДЕНĔПЕ

1. Александр Терентьевич **Некрасов** — Куславкка районĕнчи Пăрмасри пуçламăш шкул заведующийĕ тата учителĕ.

2. Анастасия Моисеевна **Тимофеева** — Тăвайри вăтам шкулăн пуçламăш класĕсенче вĕрентекен учительница.

### ЭÇЛЕХ ХЕРЛЕ ЯЛАВ ОРДЕНĔПЕ

1. Степан Пудович **Вишняков** — Шăхасан районĕнчи Вăйман Кипекри çичĕ çул вĕренмелли шкул директорĕ тата учителĕ.

2. Константин Васильевич **Волков** — Комсомольски районри Луцкири пуçламăш шкул заведующийĕ тата учителĕ.

3. Елизавета Тимофеевна **Волкова** — Красноармейски районри Чадукассинчи пуçламăш шкул заведующийĕ тата учителĕ.

4. Людмила Григорьевна **Декисова** — Шупашкарти пĕрремĕш номерлĕ вăтам шкул учительницы.

5. Зоя Максимовна **Здорнова** — Шупашкар районĕнчи Якимовăри çичĕ çул вĕренмелли шкул учительницы.

6. Георгий Леонтьевич **Куликов** — Калинино районĕнчи Хăмăшри çичĕ çул вĕренмелли шкул учителĕ.

7. Михаил Петрович **Макаров** — Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссарĕ.

8. Иван Никонорович **Никоноров** — Чурачăк районĕнчи Шупуçри çичĕ çул вĕренмелли шкул директорĕ тата учителĕ.

9. Александр Григорьевич **Обухов** — Улатăр районĕнчи Чăварлейри суккăрсен шкулĕн директорĕ тата учителĕ.

10. Раиса Александровна **Раськина** — Чкаловски районри Патăрьелĕнчи çичĕ вĕренмелли шкул учительницы.

11. Вера Тимофеевна **Томасова**—Ишлей районĕнчи Маналти çичĕ çул вĕренмелли шкул учительницы.

12. Алексей Егорович **Топтыгин** — Шăмăршă районĕнчи çутĕç пайĕн шкул инспекторĕ.

13. Иван Егорович **Ярадайкин** — Етĕрнери педагогика училищинчи преподаватель.

14. Любовь Ивановна **Яшмолкина** — Сĕнтĕр районĕнчи Шупуçри пуçламăш шкул заведующийĕ тата учительницы.

### «ЗНАК ПОЧЕТА» ОРДЕНĔПЕ

1. Константин Афанасьевич **Афанасьев**—Шупашкар районĕнчи Коснарти пуçламăш шкул заведующийĕ тата учителĕ.

2. Анатолий Андрианович **Воронцов** — Ишлейри вăтам шкул директорĕ тата учителĕ.

3. Мария Михайловна **Гаврилова** — Çĕмĕрлери иккĕмĕш номерлĕ вăтам шкул учительницы.

4. Феония Клементьевна **Железкова** — Шупашкарти пĕрремĕш номерлĕ вăтам шкулти пуçламăш классене вĕрентекен учительница.

5. Анастасия Антоновна **Кириллова**—Шупашкар хулинчи çутĕç пайĕн заведующийĕ.

6. Клавдия Елизаровна **Меркурьева** — Шупашкар районĕнчи Шемшерти вăтам шкул учительницы.

7. Ольга Васильевна **Миловидова** — Пĕрецри вăтам шкулти пуçламăш классене вĕрентекен учительница.

8. Александра Арсентьевна **Орлова** — Советскинчи вăтам шкул учительницы.

9. Екатерина Александровна **Семенова**—Шупашкар хулинчи пĕрремĕш номерлĕ вăтам шкул учительницы.

10. Андрей Трофимович **Трофимов** — Чăваш АССР Наркомпросĕн учительсен пĕлӳне ӳстермелли институтĕнчи методист.

11. Анна Дмитриевна **Трофимова** — Етĕрнери вăтам шкул учительницы.

12. Александра Николаевна **Золотова** — Куславккари вăтам шкул учительницы.

### «ЗА ТРУДОВУЮ ДОБЛЕСТЬ» МЕДАЛЬПЕ

1. Агриппина Александровна **Александрова**—Элĕк районĕнчи Писĕпри çичĕ çул вĕренмелли шкул директорĕ тата учительницы.

2. Ираида Порфирьевна **Алексеева** — Чкаловски районри Тикешри пуçламăш шкул заведующийĕ тата учительницы.

3. Любовь Николаевна **Богатырева** — Шупашкарти иккĕмĕш номерлĕ вăтам шкул директорĕ тата учительницы.

4. Ирина Дмитриевна **Глухова** — Октябрьски районри Кутемерти çичĕ çул вĕренмелли шкул директорĕ тата учительницы.

5. Екатерина Захаровна **Дерякова** — Чкаловски районри Тăвăнри çичĕ çул вĕренмелли шкул учительницы.

6. Марина Евдокимовна **Евдокимова** — Вăрмар районĕнчи Кив Вăрмарти çичĕ çул вĕренмелли шкул учительницы.

7. Тамара Алексеевна **Еремина** — Калинкинори вăтам шкул учительницы.

8. Евграф Иванович **Иванов** — Канаш районĕнчи Аслă Мамири çичĕ çул вĕренмелли шкул учителĕ.

9. Тимофей Иванович **Иванов** — Шăхасан районĕнчи Шĕкĕрти çичĕ çул вĕренмелли шкул учителĕ.

10. Александра Михайловна **Кабаевская** —Куракинăри вăтам шкул директорĕ тата учительницы.

11. Екатерина Николаевна **Крылова** — Улатăр районĕнчи Елушовăри пуçламăш шкул учительницы.

12. Серафима Андреевна **Лысенина** — Çĕрпӳри вăтам шкул учительницы.

13. Агриппина Матвеевна **Матвеева** — Комсомольски районри Çĕрпӳлĕнчи пуçламăш шкул учительницы.

14. Марфа Николаевна **Николаева** — Чăваш АССР Наркомпросĕн учебникĕсемпе программăсем енĕпе ĕçлекен инспекторĕ.

15. Мария Ивановна **Осипова** — Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Паникассинчи пуçламăш шкул заведующийĕ тата учительницы.

16. Марфа Парамоновна **Парамонова** — Тăвай районĕнчи Лачкассинчи пуçламăш шкул заведующийĕ тата учительницы.

17. Мария Григорьевна **Педько** — Çĕмĕрлери иккĕмĕш номерлĕ вăтам шкул учительницы.

18. Алексей Петрович **Петров** — Первомайскинчи вăтам шкул директорĕ тата учителĕ.

19. Валентина Сергеевна **Сергеева** — Шăхасанти вăтам шкул учительницы.

20. Вера Владимировна **Щербакова** — Вăрмар районĕнчи Чулкас Сĕнтĕрти пуçламăш шкул заведующийĕ тата учительницы.

### «ЗА ТРУДОВОЕ ОТЛИЧИЕ» МЕДАЛЬПЕ

1. Александра Ивановна **Авдеева** — Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Тарапайкассинчи çичĕ çул вĕренмелли шкул учительницы.

2. Николай Михайлович **Автономов** — Муркаш районĕнчи Тивĕшри вăтам шкул учителĕ.

3. Ирина Александровна **Александрова**—Çĕрпӳ районĕнчи Сталинори çичĕ çул вĕренмелли шкул учительницы.

4. Григорий Амвросьевич **Амвросьев** — Вăрнарти вăтам шкул учителĕ.

5. Прасковья Андреевна **Барабина** — Пăрачкаври пуçламăш шкул заведующийĕ тата учительницы.

6. Анфиса Никитична **Волкова** — Шупашкар хулинчи çичĕ çул вĕренмелли чăваш шкулĕн директорĕ тата учительницы.

7. Мария Всеволодовна **Жеглова** — Етĕрне районĕнчи Чакăнарти çичĕ çул вĕренмелли шкул учительницы.

8. Александра Сергеевна **Кустарина** — Канашри педагогика училищинчи учительница.

9. Мирония Васильевна **Масленникова** — Тăвайри вăтам шкул учительницы.

10. Иван Осипович **Осипов**—Шупашкар районĕнчи Т —Куракинчи вăтам шкул директорĕ тата учителе.

11. Константин Павлович **Павлов** — Вăрмар районĕнчи çутĕç пайĕн заведующийĕ.

12. Андрей Арнстархович **Петров** — Çĕмĕрле районĕнчи Хутарти вăтам шкул директорĕ тата учителĕ.

13. Александр Константинович **Синдячкин**—Йĕркеç районĕнчи Хăмăç Патăрьелĕнчи çичĕ çул вĕренмелли шкул учителĕ.

14. Клавдия Семеновна **Скляр**—Улатăрти 8-мĕш номерлĕ вăтам шкул учительницы.

15. Александра Аркадьевна **Соловьева** — Шăхасанти вăтам шкул учительницы.

16. Василий Спиридонович **Спиридонов**—Красноармейски районри Упири вăтам шкул учителĕ.

17. Герман Степанович **Степанов** — Елчĕк районĕнчи çутĕç пайĕн заведующийĕ.

18. Апполинария Степановна **Степанова**—Канашри вăтам шкул учительницы.

19. Марфа Дмитриевна **Трубина**—Куславкка районĕнчи Аслă Куснарти çичĕ çул вĕренмелли шкул учительницы.

20. Мария Алексеевна **Федотова**—Калинино районĕнчи Чалăм Какшăмри пуçламăш шкул учительницы.

### ÇЕР АШĂНСА ÇИТМЕН ЗОНАРА ПАХЧА-ÇИМĔÇ ТУСА ИЛНИ

Колымăра çуллахи вăхăтра çĕр çиелтен кăна йăпăнать. Апла пулсан та, Колыма çыннисем пахча-çимĕç туса илме вĕренчĕ.

Кăçалхи çул вĕсем ку тĕлĕшпе пысăк ситĕнӳсем тунă. Вĕсем темиçе çĕр тонна çĕрулми, 1.000 тонна ытла купăста, нумай киш-кашшĕр туса илнĕ. 1944 çулта харпăрăй пахчисенче туса илнĕ пахча-çимĕçе ытти çĕртен турттарса пырас пулсан, 184 вагон кирлĕ пулнă пулĕччĕ. Магаданра нумаях пулмасть уçăлнă выставкăра харпăрăй пахчисенче туса илнĕ пахча-çимĕçсем питĕ тĕрлĕ те шултăра пулнине курса çынсем питĕ тĕлĕнчĕ. (ТАСС).

## СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

### Çар промышленность предприятийĕсенчен харпăрăй ирĕкĕпе тухса кайнă тата çав предприятисене хăйсен ирĕкĕпех каялла тавăрăнакан çынсене амнисти парасси çинчен

Çар промышленность предприятийĕсенчен харпăрăй ирĕкĕпе тухса кайнă çынсем нумайĕшĕ юлашки вăхăтра хăйсен ирĕкĕпех хăйсен предприятийĕсене каялла тавăрăнмине шута илсе, СССР Верховный Совет Президиумĕ çапла йышăнать:

1. Çар промышленность предприятийĕсенчен, çавăн пекех тата промышленноçăн ытти отраçĕсенчи предприятисенчен харпăрăй ирĕкĕпе тухса кайнă çынсене, СССР Верховный Совет Президиумĕ 1941 çулхи декабрĕн 26-мĕшĕнче «Çар промышленность предприятийĕсенчи рабочисемпе служащисем предприятиреи харпăрăй ирĕкĕпе тухса кайнишĕн ответлă пуласси çинчен» кăларнă Указ тăрăх айăплама тивĕçлĕ çынсене, вĕсем çак Указа кăлариччен çав предприятисене хăйсен ирĕкĕпех каялла тавăрăнни пулсан, амнисти памалла тăвас.

2. 1-мĕш статьяра кăтартнă предприятисенчен харпăрăй ирĕкĕпе тухса кайнă, анчах 1945 çулхи февралĕн 15-мĕшĕччен хăйсен предприятийĕсене хăйсен ирĕкĕпех каялла тавăрăнакан çынсене те çак Указ тăрăх амнисти памалла тăвас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль, 1944 çулхи декабрĕн 30-мĕшĕ.

# Харпăрхăй перекетлесе хăварнă тырра— Хĕрлĕ Çар фондне

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, январĕн 2-мĕшĕ. (Телефонпа, хамăр корр.). Районри кашни колхозрах пухусем пулса ирттерĕç. Вăл пухусенче Хĕрлĕ Çар фондне тырă парасси çинчен сӳтсе-явăрĕç. Колхозсенчен пĕлтерĕнĕ тăрăх, районри колхозниксем 14165 пăт тырă Хĕрлĕ Çар фондне пама йышăннă. Вăл шутран 11000 пăтне хатĕрлев пунктне леçсе панă.

Калинин ячĕпе тăракан колхозра пуху пысăк активлăхпа иртнĕ. Пухура пулнă колхозниксем нумайĕшĕ хĕрӳллĕ сăмахсем тухса каланă. 56 çула çитнĕ М. Семенова колхозница çапла каланă.

— Хĕрлĕ Çарăн çитĕнĕвĕсемпе хавхаланса, ывăнма пĕлмесĕр ĕçлерĕмĕр, вăйлă тырпул туса илтĕмĕр. Манăн икĕ ывăл Хĕрлĕ Çар ретĕнче тăшмана хирĕç çапăçаççĕ. Пирĕн кашнийĕнех е упăшки, е ывăлĕ, е шăлĕпе пиччĕшĕ Хĕрлĕ Çарта. Хĕрлĕ Çара тырă пани хамăр сывăх çынсене паниех пулать. Хĕрлĕ Çаршăн эпĕ нимĕн те шеллеместĕп. Хамăр сывăх çынсем тăшмана çĕнтерсе хăвăртрах киле таврăнчăр тесе, хам перекетлесе хунă тырăран 8 пăт паратăп, хамăр колхоз членĕсене те çавăн пекех тума чĕнетĕп.

72 çула çитнĕ И. Ефимов юлташ çапла каланă:

— Эпĕ хамăн ĕмĕрте виçĕ вăрçă курнă. Вăрçă тырпул ыйтать. Тăшмана çĕнтерес тесен, Хĕрлĕ Çара пур майсемпе те пулăшмалли кирлĕ. Эпĕ ватă, вăрçăра пулаймастăп. Манăн икĕ ывăлăм вăрçăра, эпĕ вĕсене пулăшас кăмăлпа çунса пурăнатăп. Çак шухăшăма пурнăçлас тесе, 5 пăт тырă Хĕрлĕ Çар фондне паратăп.

Çак ватă колхозниксен сăмахне хăпăл туса, пухура пулнă кашни колхозникех 5—10 пăт тырă пачĕç. Отечественнăй аслă вăрçă инваличĕ Н. Павлов 15 пăт, Д. Васильев 12 пăт пама пулчĕç.

«Партизан», «Сила», «Правда», «12 лет Октября» колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне пама пулнă тырра пĕтĕмпех хатĕрлев пунктне леçсе панă. «Малалла» колхоз пĕр кунта 22 лавпа 400 пăт тырă хатĕрлев пунктне леçнĕ.

**С. ШАДИН.**

* * *

СЕНТЕРВĂРРИ, январĕн 2-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне пама йышăннă тырра пурте тенĕ пекех леçсе пĕтерчĕç. Киров ячĕпе тăракан колхоз пĕр кунта 240 пăт лессе панă. Çак колхоз членĕсем Васильев 12 пăт, Кудряшов 5 пăт, Петров 5 пăт панă.

Анаткас ялсоветне кĕрекен колхозсем те Хĕрлĕ Çар фондне пама йышăннă тырра леçсе пĕтернĕ.

Нумай колхозсем шайкка тыррине çитес уйăхсемшĕн аванс шучĕпе параççĕ. Колхозниксем йышăннă тăрăх, 5123 пăт шайкка тырри килес çулшăн пама йышăннă. Районри 55 колхозран 18-шĕ хăйсем илнĕ обязательствăна ăнăçлăн пурнăçланă.

**А. МИТРОФАНОВА,**
**ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.**

* * *

ИШЛЕЙ, январĕн 2-мĕшĕ. (Телефонпа). Кибечкасси ялсоветне кĕрекен колхозсен членĕсем Хĕрлĕ Çар фондне 806 пăт тырă пама пулчĕç. Çак тырра пĕтĕм. пех хатĕрлев пунктне леçсе панă.

**С. ПАЙМАНОВ,**
**Кипечкасси ял Совечĕн председателĕ.**

# Вăрнар районне куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялав пачĕç

ВАРНАР, январĕн 2-мĕшĕ. (Телефонпа). Вăрнар районне вăйлă тырпул туса илнĕшĕн Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне панă май районри малта пыракан «Первое мая» колхозра ялхуçалăх работникĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ.

Çак колхоза МТС-ăн тата колхозсен чи лайăх çыннисем, ялхуçалăх специалисчĕсем тата партипе совет активĕ 300 çын ытла пухăннă. Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн заместителĕ Шорников юлташ колхозниксемпе колхозницăсене, машин. но-тракторнăй станцири работниксене тата ялхуçалăх специалисчĕсене Оборонăн Государственный Комитечĕн Хĕрлĕ Ялавне илнĕ ятпа саламларĕ.

Шорников юлташ куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялава райсовет исполкомĕн председательне Осипов юлташа пачĕ. Осипов юлташ, ялава илсе, çапла каларĕ: пирĕн районри колхозниксемпе колхозницăсем 1944 çулта лайăх ĕçлерĕç. Партипе правительство вĕсен ĕçне пысăка хурса хакларĕç. Колхозниксемпе колхозницăсен ячĕпе эпĕ çакна каласшăн: çак хисеплĕ ялава эпир хамăр аллăран ямăпăр. Кăçал та иртнĕ çулхи пекех пĕтĕм вăя хурса ĕçлесе, вăйлă тырпул туса илĕпĕр, терĕ.

Осипов юлташ хыççăн «Первое мая» колхоз председателĕ Васильев, «Самолет» колхоз председателĕ Петров, трактор бригадин бригадирĕ Тойдеряков, «Победа» колхоз председателĕ Андреев юлташсем тухса каларĕç. Канашлăва пухăннисем районри мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене, МТС работникĕсене тата ялхуçалăх специалисчĕсене чĕнсе çыру çырчĕç. Вăл çырура вĕсем çуракинче лайăхрах хатĕрленсе, ăнăçлăн ирттерессишĕн кĕрешме чĕнеççĕ.

Юлашкинчен, Чăваш АССР Совнаркомĕн председатель заместителĕ Семенов юлташ сăмах тухса каларĕ, колхозниксемпе колхозницăсене саламласа, çĕнĕ çитĕнӳсем гума вăйпа сывлăх сунчĕ.

# Етĕрне районĕнчи колхозниксем хăйсен МТС-не пулăшаççĕ

Кăçал Мускав облаçĕнчи Ногинск районĕнчи колхозниксем хăйсен МТС-не виçĕ уйăх хушшинче: пĕр мастерской, тракторсемпе ялхуçалăх машинисене лартмалли витнĕ сарай, автомашинăсене лартма гараж, чуркăсем типĕтмелли сушилка тата типĕтнĕ чуркăсене хумалли склад, пушар деповĕ, клуб тата мунча çĕнĕрен туса панă.

Ногинск районĕнчи колхозниксен паха пулăравне ырласа, Етĕрне районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем вырăнти материалсенчен хăйсен МТС-не валли тĕрлĕ çуртйĕрсем туса пама йышăннă. Чăн малтанах, тракторсене юсанă чухне кирлĕ мастерскоя, ялхуçалăх машинисене лартмалли сарая тата пĕр мунча çĕнĕрен тума палăртнă. МТС-ăн 8 гектар йышăнакан картишĕ тавра карта тытма тата çăл алтса пама йышăннă. Тракторсене сĕрмелли тĕрлĕ сусене усрама витнĕ сарай тума палăртнă. Уйрăмăнах комсомолецсемпе çамрăксем пуçарулла ĕçлеççĕ. Комсомолецсем 128 кубометр йывăç, 68 килограмм тимĕр пăта, 1,500 штука кирпĕч, 870 килограмм мунчала тата чӳпĕк тупса пама обязательство илнĕ. Унсăр пуçне, çуртйĕрсене тунă çĕре хутшăнса ĕçлеме пулнă. Комсомол организацийĕсем чылайăшĕ хăйсем илнĕ обязательствăна ăнăçлă пурнăçлаççĕ.

Районри колхозниксем хăйсен обязательствисене лайăх пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Çак вăхăта 430 кубометр йывăç, 26.000 штука кирпĕч, 190 кубометр чул, 140 килограмм тимĕр пăта тата ытти япаласем те хатĕрленĕ.

Етĕрне районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен МТС-не культурăллă тата кăтартуллă тăвассишĕн тăрăшаççĕ. хăйсем илнĕ обязательствăна Хĕрлĕ Çар 27 çул тултарнă тĕле пĕтĕмлех пурнăçлассишĕн кĕрешеççĕ.

**В. АКЧЕЛЬ.**

# Венгри делегацийĕ Мускава перемири тума килнĕ

Перемири тăвас тĕлĕшпе калаçмашкăн Мускава Венгрин Вăхăтлăх Правительствин делегацийĕ çитнĕ. Делегацире çаксем тăраççĕ: Ют çĕршыв Еçĕсен Министрĕ Дьендеш Янош господин (делегаци председателе), Оборона Министрĕ генерал-полковник Вереш Янош тата Министрсен Кабинетĕн Статс-секретарĕ Балог Иштван господин.

Киев вокзалĕнче делегацие Ют çĕршыв Еçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ В. Г. Деканозов, СССР Наркоминделĕн Протокол отделĕн Заведующийĕ Ф. Ф. Молочков тата Оборона Халăх Комиссариачĕн Тулашри çыхăнусен отделĕн Начальникĕ М. П. Кутузов генерал-майор хирĕç тухса кĕтсе илнĕ.

## ВЕНГРИН ВАХАТЛАХ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ГИТЛЕРЛА ГЕРМАНИЕ ХИРЕÇ ВАРÇАПА ТУХАССИ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРНĔ

ДЕБРЕЦЕН, декабрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Венгрин Вăхăтлăх Правительстви ĕнер каçхине пулса иртнĕ ларура гитлерла Германие хирĕç вăрçăпа тухма пĕрсаслăн йышăннă. Халăхăн Вăхăтлăх Правительстви пелтерĕвĕнче çапла каланă: пĕтĕм вăй.хала пухса, «Союзлă державăсем Германие таклăн çĕнтеричченех эпир Совет Союзĕпе тата унăн союзникĕсемпе пĕрле çапăçăпăр. Союзниксем çĕнтерни кăна Венгрин никама пăхăнманлăхне çирĕплетме пултарать. Çакăнпа пĕрлех Халăхăн Вăхăтлăх Правительстви Венгри халăхне çакăн çинчен пелтерет: эпир Совет Союзĕн правительствинчен тата союзлă державăсен правительствисенчен пирĕнне перемири тума ыйтрăмăр».

## ВЕНГРИН ВАХАТЛАХ ПРАВИТЕЛЬСТВИНЕ ТУНА ПИРКИ АНГЛИРЕ МĔН ÇЫРАÇÇĔ

ЛОНДОН, декабрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). «Манчестер гардиан» хаçатăн дипломатиллĕ обозревателĕ Венгрире çĕнĕ правительство туса хуни çинчен çапла çырать: Венгри тăшманла вăй пуласси пĕтсе лармалах, тет. Çĕнĕрен тунă Вăхăтлăх Правительствăра прогрессивнăй тĕп партисем пурте пур. Çав партисем пурте Вăхăтлăх Правительство кăларса тăратнă программăна йышăнчĕç. Вăл программăна сылтăмсем те, сулахайсем те йышăнмалла, мĕншĕн тесен вăл çĕр тытса тăрас йĕркене улăштарма сăмах парать тата уйрăм çынсен пуçаруĕнче те чăрмантармасть.

«Иоркшир Пост» хаçат çапла калать: Венгри правительствине Румынири е Болгарири правительство евĕрлĕ тунă пулас, çĕнĕ правительство программин тĕп шухăшĕ—çĕр реформине ирттересси тата союзниксемпе пĕрлешсе ĕçлесси.

«Дейли геральд» хаçатăн дипломатиллĕ обозревателĕ Юэр Венгри халăхĕн Вăхăтлăх Правительствин составĕ пирки çапла çырать: «Тĕрĕссишĕ илсен, ку правительство чăн-чăнах представительсен правительстви пулса тăрать. Вăл правительствăна пысăк авторитетлă тата паллă вырăн йышăнса тăракан çынсем кĕреççĕ. Çакăн пек правительство вăл Венгрири пур лайăх çынсене те хăй тавра пĕтĕçтерме пултарать».

# Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, декабрĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ декабрĕн 31-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Голландире тăшман Тильбург хулинчен çурçĕртерехре Маас шывĕ урлă хăйĕн патрулĕсене кăсарнă. Союзниксем пенĕ хыççăн патрульсем каялла чакнă. Арден сăвăлĕн çурçĕр флангĕнче лăпкă тăнă. Рошфорт хулинче союзниксен çарĕсене хирĕç тăшман малтанхи пекех хытă тăрса çапăçнă.

Арден сăвăлĕн кăнтăр флангĕнче союзниксем Лаваэль тата Шенонь хĕрринче сиртсе тухнă. Союзниксен чăсĕсем Бастонь хулинчен икĕ миля çурă хĕвеланăçнерехре тăраççĕ. Тăшман хытă хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере, союзниксен çарĕсем Бастонь хулине каякан коридора аслăлатнăçемĕн аслăлатаççĕ. Арлон хулипе Бастонь хули хушшинчи çула тăшмантан тасатнă. Союзниксен чăсĕсем Арланд хулин кăнтăр-хĕвелтухăç хĕррине çитсе тухнă. Дикирх хули районĕнче союзниксем тăшмана Этельбюркран çурçĕртерехре ларакан çӳллĕ вырăн çинчен хăваласа янă. Сĕр пывăн сылтăм хĕрри Дикирх хулипе Эхтернах хули хушшинче халĕ çурри ытла союзниксем аллинче. Саар шывĕ улăхĕнче патрульсем кăна кĕрешнĕ.

ЛОНДОН, декабрĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ декабрĕн 31-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Италире Серкьо шывĕ улăхĕн районĕнче 8-мĕш армин чăсĕсем Варга хулине çĕнĕрен йышăннă. 5-мĕш армипе 8-мĕш армин участокĕсенче патрульсем кăна кĕрешнĕ.

Франципе Итали чикки çывăхĕнчи çырансем патĕнче союзниксен карапĕсем çĕр çинчи чăсĕсене пулăшса тăнă. Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс авиацийĕ 750 вĕçева яхăн тунă.

ЛОНДОН, январĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ январĕн 1-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Арден сăвăлĕн çурçĕр флангĕнче лăпкă тăнă. Хаяр çапăçусем хыççăн союзниксен çарĕсем Рошфор хулине йышăннă. Арден сăвăлĕн кăнтĕрти флангĕнче Бастонь хулинчен хĕвеланăçнерехре союзниксен танковăй тата пехота чăсĕсем çурçĕр-хĕвелтухăç еннелле атака тунă. Шеноньхули çывăхĕнче тата Лютрбуа хулинчен çурçĕртерехре тăшман танкĕсемпе пехотин темиçе контратакине сирсе янă. Лютрбуа хули çывăхĕнчи çапăçура союзниксем нимĕçсен 18 танкне пĕтерсе тăкнă. Ку районра тăшман артиллерийĕ хытă персе тăнă. Вильф хулинчен кăнтăртарахра союзниксем, тăшман хытă хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере, кĕштах малалла кайнă. Сĕр шывĕнчен кăнтăртарахри районра Дикирх хулипе Эхтернах хули хушшинче союзниксем Рейсдорф хулине йышăннă. Мозель шывĕпе Саар шывĕ районĕнче патрульсем хытă кĕрешнĕ. Саарлаутерн патĕнче тăшмана тапăнма тунă укреплени çине тăшман артиллерийĕ вăйлăн персе тăма пуçланă.

Кольмар хулинчен çурçĕртерехре тата хĕвеланăçнерехре нимĕçсен контратакине сирсе янă. Ку секторта икĕ кун хушшинче 300 нимĕçе яхăн тыткăна илнĕ.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн Голландири тата Германири вăрçă объекчĕсем çине бомбăсем нумай пăрахнă.

Январĕн 1-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле çăмăл бомбардировщиксем Берлин çине бомбăсем пăрахнă, Остерфельд хулинчи чугун çул объекчĕсене хаярăн тапăннă.

ЛОНДОН, январĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ январĕн 1-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Италире Дертьо шывĕ улăхĕнче 5-мĕш армин чăсĕсем каллех малалла кайнă. Сом.маколонья хулине çĕнĕрен тытса илнĕ. Фаэнца хулинчен çурçĕртерехре 8-мĕш армин чăсĕсем çаплах тăшмана хĕссе пыраççĕ, нимĕçсем хытă хирĕç тăраççĕ пулин те, союзниксем халăх пурăнакан чылай пункт-сене туртса илнĕ.

Союзниксен авиацийĕ По шывĕ улăхĕнчи, Бреннер ту кăссинчи тата Çурçĕр-хĕвелтухăç Италири чугун çул объекчĕсене тапăннă.

## АМЕРИКАНЕЦСЕН 1.300 БОМБАРДИРОВЩИКĔ ГЕРМАНИЕ ТАПАННИ

ЛОНДОН, декабрĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй ĕçкеле кунта çапла пĕлтернĕ: американецсен 1.300 йывăр бомбардировщикĕ паян Гамбургри, Гарбургри тата Мисбургри нефть юхтаракан заводсене, Гамбургри подводнăй лодкăсен базине. Венцендорфри «Мессершмитт» завочĕне аэродрома; Рур облаçĕн кăнтăр-хĕвелтухăç пайĕнчи сортировка станцине, Рейн, Мозель тата ытти шывсем çинчи 6 чугун çул кĕперне тата Германи çарĕсем каякан 4 чугун çул узелне пырса тапăннă.

«Вĕçекен крепоссемпе» йышăнса самолетсене 700 ытла истребитель хӳтĕлесе пынă.

## ФРАНЦИРЕ МОБИЛИЗАЦИ ТУМА ЙЫШАННИ

ЛОНДОН, декабрĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Франци правительстви 1945 çулхи малтанхи тăватă уйăх хушшинче мобилизаци туса ирттермелли ĕçсене паллă туса хунă. Вăл ĕçсенчен чи пирвайхи—1943 çулта çара илмелли çамрăксене мобилизацилесси пулать. Вĕсене 1945 çулхи январь вĕçĕнче çара илмелле.

# *Полша Халăхĕн Ирĕклĕх Комитетĕнчен Польша республикин Вăхăтлăх Правительстви туса хурасси çинчен Польша Халăх Совечĕ йышăнни*

ЛЮБЛИН, декабрĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Люблин хулинче Польша халăх влаçĕн Верховный органĕн—Польша Халăх Совечĕн ларăвĕ пулса иртнĕ.

Ларăва унăн председателĕ Болеслав Берут уçнă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл Польша Халăх Совечĕн çĕнĕ депутачĕсен списокне вуласа панă. Списока çирĕплетнĕ хыççăн çĕнĕ депутатсем демократиллĕ Подъшăшăн тӳрремĕн ĕçлеме пулса тупа тунă. Çакăн хыççăн Люблинра ĕнер уçăлнă хресченсен съезчĕн тата профсоюзсен делегацийĕсем декларацисем вуласа панă. Вăл декларацисенче Польшăри хуласемпе ялсенчи халăх Польшăн Ирĕклĕх Комитетĕнчен Вăхăтлăх Правительство туса хума ыйтнă.

Çакăн хыççăн Польша Халăх Совечĕн председателĕ послани вуласа панă. Вăл посланире çапла каланă:

«Халĕ вĕçленекен çул поляксен историне ĕмĕр манми çул пулса кĕрсе юлать Вăл никама пăхăнман Польша туса хурассине пуçласа ячĕ. Паттăр Хĕрлĕ Çар пулăшнипе Польша çĕрĕн чылай пысăк пайне нимĕç оккупацийĕнчен хăтарнă. Халĕ ĕнтĕ ирĕке кĕларнă тăван çĕр çинче Польша çарĕн икĕ армийĕ кĕрешеççĕ. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳве Польша халăхĕ ытларах та ытларах хутшăнать».

«Польша Халăхĕн Совечĕ халь пĕр çул тултарчĕ,—тенĕ млалала посланире, — вăл хăй тавра Польша халăхĕн чи лайăх представительĕсене организацилерĕ. Вĕсем нимĕç оккупанчĕсене хирĕç тата демократиллĕ Польша тăвассишĕн вирлĕн кĕрешеççĕ. Пирĕн ĕç ăнса пырать, мĕншĕн тесен Польша халăхĕ хăйĕн никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешме паян никăçанхинчен те ытларах пĕрлешнĕ. Пирĕн ĕç тухать, мĕншĕн тесен хамăр ирĕклĕхе тухассине эпир Англи, Совет Союзĕ тата Америка пĕрлешĕвĕн çĕнтерĕвĕпе çыхăнтаратпăр, мĕншĕн тесен эпир Советлă Социализмлă Республиксен Союзĕнчи тăванла халăхсемпе союзлă пулса тăратпăр, çав халăхсем Европăри пусмăрта асапланакан халăхсене ирĕклĕхпе мир парасçĕ».

Фашизма хирĕç пыракан кĕрешӳве Польша демократийĕ анлăн хутшăннине палăртнă хыççăн Берут Польша реакционерĕсем йышăннă позицие вăйлăн критиклет.

Демократиллĕ Польша вăрçă хыççăнхи Европăра мĕнле вырăн йышăнса тăрасси çинчен Берут çапла каланă: çак ыйту Польшăн экономикăллă вăйĕпе, унăн тĕнчери вырăнĕпе çыхăнса тăрать, вăл тата Польша цивилизацине нимĕçсен çĕнĕ агрессийĕнчен тата фашистла тискерлĕхрен сыхласа тăракан çĕршыв пулса тăнине çыхăнса тăрать. Арçыбевский господин пек социалистла суя вывескăпа е Миколайчик господин пек хресченле суя вывескăпа витĕнсе тăракан реакци агенчĕсем влаçа тытса тĕрас пулсан, çав пысăк ĕçе Польша тăваймасть. Демократиллĕ Польша çеç, Хĕвелтухăçĕнчи аслă кӳршипе — Совет Союзĕпе çирĕп союз тытса туслă пурăнакан Польша çеç миршăн тăма пултарать. «СССР пулăшман пулсан,—тет Берут, — Польша хăйĕн вăйĕпе кăна гитлерла пусмăртан хăтăлма пултарайман пулĕччĕ. Çĕршыв çав тери арканнă вăхăтра хĕçпăшаллă вăйсем тата никама пăхăнман государство туса хума—Польша пуринчен ытла СССР халăхĕсен аслă çулпуçĕ Иосиф Сталин Маршал пулăшнипе кăна пултарнă. Польша Совет Союзĕпе, Америкăпа тата Англипе союзлă пулни пĕтĕмĕшле мирăн никĕсĕ пулса тăмалла».

Франци представителĕ Люблина килнă тата демократиллĕ Польша представителĕ Парижа кайнă Польшăпа Франци хушшинчи килĕшӳвĕн никĕсĕ пулса тăчĕ. Вăл килĕшӳ оборона ыйтăвĕсемпе тата французсемпе поляксен хушшинчи ялanхи туслăхпа сыхăнса тăрать.

Паянхи кунра пире,—тет Берут,—Чехословакипе, Югославипе, Болгарипе тата гитлерла пусмăрлăхран хăтăлакан ытти çĕршывсемпе те туслă пĕрлĕх сыхăнтарса тăрать.

Берут Польша обществин пур сийĕсем те Польша Халăхĕн Ирĕклĕх Комитечĕн программипе манифесчĕ тавра пĕрлешнине палăртать тата вăл комитета организацилене хыççăн писăк ĕçсем туни çинчен калать. Польша халăхĕ пĕрлĕхлĕ пулнипе, Польша Халăхĕн Ирĕклĕх Комитечĕ пит йывăр условисенче япăхнă промышленноçа ура çине тăратрĕ, тырпул туса илчĕ, Польша çарне ӳстерĕ, çĕршывра сыхăну ĕçне йĕркелерĕ, шкулсемпе университетсене вĕренӳ ĕçне йĕркелерĕ, политика, профсоюз, коопераци, культурăпа общество тĕлĕшпе атăланма кирлĕ условисем туса панă. Юлашкинчен, Польша демократийĕн çав тери палăлă, историллĕ ĕçĕ вăл—икĕ уйăх хушшинче Польшăра çĕр реформине ирттерни. Поляк хресченĕсене помещиксен çĕрне касса панă, çак ĕçе пысăк хирĕçӳсемсĕр туса ирттернĕ. Ку çеç те маç, çĕр реформи—поляксен пĕрлĕхне çирĕплетрĕ.

Польша Халăхĕн Ирĕклĕх Комитечĕ пилĕк уйăх ĕçленĕ вăхăтра,—тенĕ посланире,—çĕршыва ертсе пыракансем тĕрĕс çулпа пынине халăх курчĕ. Польша Халăхĕн Ирĕклĕх Комитечĕпе танлаштарсан, Польшăн эмиграцири правительстви сиенлĕ ĕçсем туни питех ӳссĕн палăрса тăрать. Польша халăхĕ хăйĕн шухăш-камăлне тĕпрен палăртакан правительствăна Лондонра, мар, тăван çĕршыва курасшăн. Акă мĕншĕн ĕнтĕ ирĕке кăларнă Польша çĕрĕсенчен пуринчен те Польша Халăхĕн Ирĕклĕх Комитетĕнчен Польша республикин Вăхăтлăх Правительстви туса хума ыйтаççĕ.

Демократиллĕ партисем представителĕсем, Берут поданнине хыççăн тухса калаçса, Польша Халăхĕн Ирĕклĕх Комитетĕнчен Польша республикин Вăхăтлăх Правительствине туса хума Польша общественноçĕн анлă массисем ыйтни çинчен пĕлтернĕ.

Польша Халăх Совечĕн ларăвĕ Польша Халăхĕн Ирĕклĕх Комитетĕнчен Польша республикин Вăхăтлăх Правительствине туса хурасси çинчен решени йышăннă.

Лару йышăннă тăрăх, Вăхăтлăх Правительствăра çакăн пек министрсем пулаççĕ: министрсен совечĕн председателĕ, икĕ енĕпе-председатель, оборона, ют çĕршыв ĕçĕсен, общество хăрушсăрлăхĕн, финанс, суд тĕс, социальнăй обеспеченине сывлăх, çĕр реформи, сыхăну, юстици, промышленность, снабженине суту-илӳ, почтăпа телеграф, культурăпа искусство, информацине пропаганди министрĕсем. Министрсен совечĕн председательне, конституцин 45-мĕш статйи тĕрăх, Польша Халăх Совечĕн президенчĕ уйăрса лартнă.

Ларура йышăннă тĕрăх, Польша Халăх Совечĕн председательне Польша Халăх Совечĕн президенчĕ ирсе чĕнмелле тунă.

Декабрĕн 31-мĕшĕнче кăсична Польша Халăхăн Ирĕклĕх Комитетĕнчен Польша республикин Вăхăтлăх Правительстви туса хунă пирки Люблинра нумай хут артиллеririрен персе салют панă.

## ЛЮБЛИНРА ПАРАД ПУЛСА ИРТНĔ

ЛЮБЛИН, январĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Люблинра Польша Халăхĕн Совечĕ туса хунăранта тата Польша Халăхĕн ирĕклĕх Комитетĕнчен Польша республикин Вăхăтлăх Правительстви туса хунă ятпа çарсен парачĕ пулса иртнĕ.

Парада Польша Халăхĕн Совечĕн президенчĕ Б. Берут, премьер-министр Э. Осубка-Моравский тата Оборона министрĕ Роля-Жимерский генерал йышăннă.

## ПОЛЬША РЕСПУБЛИКИН ВАХАТЛАХ ПРАВИТЕЛЬСТВИ

ЛЮБЛИН, январĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Польша Халăх Совечĕн президенчĕ Б. Берут Польша республикин Вăхăтлăх Правительствине тума Эдвард Осубка-Моравские хушнă. Осубка-Моравский Польша республикин Вăхăтлăх Правительствине çаксенчен тунă:

Премьер-министр, вăлах Ют çĕршыв Еçĕсен министрĕ—Э. Осубка-Моравский, вице-премьер-министрсем — Веславпа Януш, çĕр ĕçĕпе çĕр реформи министрĕ—Берольд, шалти ĕçсен министрĕ—Маслянка, общественнăй хăрушсăрлăх министрĕ—Радкевич, çутĕç министрĕ — Шашовский, çуллĕр министрĕ — Рабиновский, почтăпа телеграф министрĕ—Капелинский, культурăпа искусство министрĕ—Гжимовский, снабженине суту-илӳ министрĕ—Пьотровский, информацине пропаганда министрĕ—Матушевский, промышленность министрĕ—Минц, оборона министрĕ — генерал-полковник Роля-Жимерский, юстици министрĕ—Залевский, финанс министрĕ—Домбровский, ĕç, социальнăй обеспечени тата сывлăх министрĕ—Трояновский.

Çапла, Польша республикин Вăхăтлăх Правительствине «Стронництво людове» ятлă партирен пилĕк представитель, Польшăри социалистсен партийĕнчен пилĕк представитель, Польшăри рабочисен партийĕнчен тăватă представитель, «Стронництво демократичне» партирен пĕр представитель тата партире тăманнисем икĕсын (Роля-Жимерский генерапа çуллĕр министрĕ Рабиновский) кĕреççĕ.

# Греции лару-тăру

ЛОНДОН, декабрĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Греци королĕ Дамаскинос архиепископа Греци ре. генчĕ туса хунă.

Лондонра тата Афины хулинче пичетлесе кăларнă сăмахĕнче король çапла каланă: «Халăх мана чĕнмесен», эпĕ Греции таврăнма шутламастăп, тенĕ.

ЛОНДОН, декабрĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио паян пĕлтернĕ тăрăх, Англипе Греци правительстви çарĕсем, Афины хулинче татах малалла куçса, Афины хулипе Пирей хушшинчи çултан кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри районсене парти. зансенчен тасатнă. Икĕ кун хушшинче 2000 партизана вĕлернĕ е тыткăна илнĕ. Пирей районĕнче паллă улшăнусемех пулман.

ЛОНДОН, январĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕн пĕлтерĕвĕнче çапла каланă тăрăх, союзниксем çарĕсем Афины хулин кăнтăр-хĕвелтухăç хĕррине юнашар лараканăлсене партизансенчен тасатса çитернĕ. Пирейре Англи çарĕсем портран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре çĕнĕ вырăнсем йышăннă. ЭЛАС («Халăхăн ирĕклĕх фрончĕ») çарĕсем Паллеври (Афины сывăхĕнче) радиостанцине атăкланнине декабрĕн 31-мĕшĕнче ирхине сирсе янă. Зервас полковник ертсе пыракан ЭДЕС (Папандреу правительствин майлă) çарĕсем, каялла чакса, Превези урлă Корфу утравĕ çине куснă.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ЭЛАС отрячĕсем Афины хулинчен 7 милĕ тăракан Паллеври радиостанцине тапăннă. Пралуксене тытнă пирки станци халĕ ĕçлемест..

## ГРЕЦИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ВЫРАНТАН ТУХНИ

ЛОНДОН, январĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информацин министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Дамаскинос архиепископ регент ĕçне тума тытăннă. Греци премьер-министрĕ Папандреу хăйĕн пĕтĕм министрĕсемпе пĕрле вырăнтан тухнă. Дамаскинос архиепископ Грецин çĕнĕ правительствине тума тытăннă.

## СОВЕТ ПРОФСОЮЗĔСЕН ДЕЛЕГАЦИЙĔ ПАРИЖРА

ПАРИЖ, январĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Францин ĕç министрĕ Пароди ĕç министерствинче совет профсоюзĕсен Парижри делегацине йышăннă.

СССР посолĕ Богомолов министра делегацине паллаштарнă.

Йышăнура çакăн пулнă: де Голль генерал канцелярийĕн директорĕ Палевский, ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Бидо, шалти ĕçсен министрĕ Тиксье, промышленность производствин министрĕ Лакост, общество сывлăхĕн министрĕ Бийу, авиаци министрĕ Тийон, Франципи коммунистсен партийĕн генеральнăй секретарĕ Морис Торез, Консультаци ассамблейин ĕç комиссийĕн председателĕ Кураза тата вăл комиссин членĕсем, çавăн пекех Франципи профсоюзсен представителĕсем.

Ĕç министрĕ Пароди саламлă сăмах каланă. СССР посолĕ Богомолов тата совет профсоюзĕсен делегацин председателĕ Соловьев юлташ ответлă сăмах каланă.

## РУМЫНИРЕ ÇАР ПРЕСТУПНИКĔСЕНЕ АРЕСТЛЕНИ

БУХАРЕСТ, декабрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем çапла пĕлтерĕççĕ: Румынин министрсен совечĕ йышăннă тăрăх, полици çар преступникĕсемпе легионерсене (Румынри фашисчĕсене) арестленĕ. Бухарестра кăна декабрĕн 28-мĕшĕ ыран тенĕ чух 1.200 çынна çити арестленĕ.

## РОМЭН РОЛЛАН ВИЛНИ

ПАРИЖ, январĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Паризри радио çапла пĕлтернĕ: декабрĕн 30-мĕшĕнче Ионна департаментĕнчи Везелейре хăйĕн имĕнче французсен паллă писательĕ Ромэн Роллан вилнĕ. Вăл 79 çул. та пулнă.

# Орденоносецсен юбилейĕ

Кашни кун пекех вĕтĕ çăмăр çуса тăрать. Пур çĕрте те пылчăк, траншейăсенче татах та кансĕртерех. Çăмăр шывĕ траншейăра кӳлленсе тăрать, тăм тăпра ура айĕнче çĕвăнать те шĕвек кĕсел пек чĕтренсе тăрать. Траншея тарăн мар, кăштах тарăлтастăн, татах та лайăхрах пулмалла, анчах тарăнрах чавсан аялтан шыв тапса тăма тытăнать. Куntан çур киломeтртах хĕвеланăç енче те траншейăсем. Унта хутран-ситрен ирсĕр нимĕçсен тĕксĕм каскисем курăнаççĕ, анчах самантрах çухалаççĕ. Инçетрен пысăк калибрлĕ тупă вăхăчĕ-вăхăчĕпе пирĕн траншейăсем çинелле снарядсем пăрахать. Йăнăшса вĕçсе килет те инçех те мар çĕр çине ӳксе çурăлса каять. Виçĕ орден илме тивĕçлĕ пулнăскер, Аркадий Павлович Оренбуров вăл вăхăтра траншейăра лапчăнать те, пуç урлă сиявлă тĕпренчĕкĕсем йăнăшса иртсе каяççĕ Юнашарти вăрман ҫ... снаряд çурăлнă сасса инçе-инç